25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 АВГУСТ 19 ЮНКУН 193 (6128) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕç мĕнле пыни çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ республикăра тырпулсене пухса кĕртес тата государствăна тырă парас ĕçсем çителĕксĕр пулса пыраççĕ, тесе шутлаççĕ. Августăн 15-мĕш тĕлне кĕрхи тата çурхи тĕш тырăсене 55,4 процент чухлĕ вырса пуçтарнă. Пилĕк кун хушшинче тырпулсене 18 процент чухлĕ кăна пухса кĕртнĕ, çакă вăл малтанхи пилĕккунлăхра пухнинчен те сахалтарах. Тырпулсене пухса кĕртес ĕç уйрăмăнах çак районсенче çителĕксĕр пулса пырать: Улатăр районĕ 45,6 процент вырса пуçтарнă, Йĕпреç—46,6 процент, Елчĕк—46,6 процент, Первомайски—47,9 процент, Кувакино—50,9 процент тата Пăрачкав районĕ 54,8 процент пухса кĕртнĕ.

Çак районсенче уборка ĕçĕсем питех те начар хăвăртлăхсемпе пулса пыни акă мĕншĕн килнĕ: парти райкомĕсен секретарĕсем, райсовет исполкомĕсен председателĕсем, МТС директорĕсемпе политотдел начальникĕсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хăвăрт туса ирттерни государствăшăн питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине ăнкарса илмен, чылай колхозсенчи ертсе пыракан работниксен машинăсене хирĕçле пухăш-кăмăлне пĕтермен, çавна пула машинăсемпе начар усă тăраççĕ, вĕсен тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ, çав вăхăтрах виççĕмĕш пилĕккунлăхра вырса пуçтарнă çĕр лаптăкне пĕр комбайнсемпе тата çăмăл машинăсемпе çеç вырма май пулнă. Çÿлте асăннă районсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçре юлса пынин сăлтавĕсенчен пĕри вăл—кĕрхи тырăсене вырса пĕтернĕ хыççăн çурхи тырăсене вырма вăраххăн тытăнни пулса тăрать, çакă вăл «симĕс» тата «нÿрĕ» пухăш-кăмăлсене хирĕç тивĕçлипе кĕрешменнине кăтартса парать.

Республикăри комбайнсен паркĕпе пачах та çителĕксĕр усă курнине Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ уйрăмăнах палăрт тăваççĕ. Улатăр, Кувакино, Пăрачкав, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски тата Чкаловски МТС-сен комбайнĕсемпе уйрăмăнах начар усă кураççĕ. Çак МТС-сен директорĕсемпе политотдел начальникĕсем комбайнсене пĕр чарăнусăр ĕçлеттерме пултараймарĕç, Наркомзем вара çакăн пек положенине кал ĕ те килĕшсе пурăнать.

Республикăра тăккаланчăксене хирĕç кĕрешес ĕçе начар организацилененĕ. Тырăсене выраcси, капана хываcси тата çапасси пĕр-пĕринпе çыхăнса пулса пымаççĕ. Государствăна тырпул парас тĕлĕшпе тунă пилĕккунлăх заданисене уйрăм районсем пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Тырă парас енĕпе уйрăмах Красноармейски, Улатăр тата Çĕмĕрле районĕсем юлса пыраççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăнаççĕ:

1. Чăваш АССР Наркомземне, райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсемпе политотдел начальникĕсене, колхозсен председателĕсене тырпула пухса кĕртес хăвăртлăха ÿстерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма, машинăна хирĕçле пухăш-кăмăлсене тата уборка машинисене хакламаннине пĕтерме, комбайнсене, жнейкăсене, лобогрейкăсене тата сенокосилкăсене пĕтĕм вăйĕпе ĕçлеттерсе усă курма, кашни машинăпах ĕç нормине тултарса пымалла тума тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçре çавасемпе анлăн усă курма хушас.

Улатăр, Йĕпреç, Елчĕк, Первомайски тата Кувакино районĕсенчи райсовет исполкомĕсен председателĕсене тата парти райкомĕсен секретарĕсене çакăн çинчен асăрхаттарас: çак районсем малашне те юлса пынине Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ тÿсме пултараймаççĕ, çав районсем тырпулсене пухса кĕртес хăвăртлăхсене татăклăнах ÿстермесен, вĕсем тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнмалла пулать.

2. МТС-семпе совхозсен директорĕсене тата политотделсен начальникĕсене хăйсене комбайнсемпе ĕçлемелли участоксене хирĕ тухса суйласа илме хушас. Комбайнерсене техникăллă пулăшăва вăхăтра памалла, комбайнсем ĕççĕр тăни пулмалла мар, тĕштырра бункертан комбайн пынă вăхăтрах пушатса илмелле. Комбайнсемпе вырнă чухне хăмăлсене çÿллĕ хăварма чарас.

Улатăр, Кувакино, Пăрачкав, Красноармейски тата Сĕнтĕрвăрри МТС-сен директорĕсемпе политотдел начальникĕсене вĕсем тырпулсене пухса кĕнĕ вăхăтра комбайнсемпе усă курасси çине ответсăр пăхнине кăтартса парас тата вĕсене комбайнсен ĕçне татăклă лайăхлатма хушас.

3. Райсовет исполкомĕсен председателĕсене, ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, ялсоветсемпе колхозсен председателĕсене, çĕрĕç органĕсене, партипе комсомол организацисене тăккаланчăкка хирĕç татăклăн кĕрешессине организацилеме хушас. Комбайнсен тата тырпул пухмалли машинăсен пурин те зерноуловительсем пулмалла, тырпула комбайнсемпе тата жнейкăсемпе вырса илнĕ хыççăн пучаxсене кĕреплепе тураса тĕплĕн пухас ĕçе организацилемелле, çавăн пекех тата пучахсене алăпа та пухмалла.

Парти райкомĕсен тата политотделсен работникĕсен уборка пахалăхне хăйсен тĕрĕслесе тăмалла; колхоз председателĕсен тырпулсене вырса пуçтарнă участоксене йышăннă чухне уйрăмăнах ĕçĕн пахалăхĕ çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Районсемпе колхозсен руководителĕсене иртнĕ çулти йăнăшсене тумалла марри çинчен асăрхаттарас. Иртнĕ çул кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕçсене вăраха ярса пынă пирки чылай тырпул тăккаланнăччĕ. Районсемпе колхозсен руководителĕсене кĕлте турттарса капана хывас тата авăн çапас ĕçсене маcсăллăн тума тытăнма хушас, çак ĕçе талăкĕпех туса пымалла, туртăм вăйĕ çителĕксĕр колхозсенче кĕлтене алăпа çĕклесе капана хывас ĕçе йĕркелемелле.

4. СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш АССР-ĕнчи уполномоченнăйне Герасимов юлташа, райсовет исполкомĕсен председателĕсене тата ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене государствăна тырă памалли пилĕккунлăх заданисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма хушас; çакна тума колхозсенче ялан ĕçлекен транспорт бригадисем организацилемелле, тĕштырăсене кондициллĕ тăвассишĕн тăрăшмалла. Тырă парас плана тултаричченм транспорт бригадисене урăх ĕçсене куçарма чарас.

Ĕçкунĕсем çине аванс шучĕпе тĕштырă парассине СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулти тырпулсене пухса кĕртесси тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парасси çинчен» йышăннă постановлени тăрăх çирĕппĕн туса пымалла.

5. Райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене, колхозсен председателĕсене Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ кашни колхозра ача яслисемпе площадкисем организацилесси тата вĕсене колхозниксен мĕнпур ачисене явăçтарасси çинчен йышăннă решенисене пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртме хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакăн çинчен аса илтереççĕ: «Тырпулсене вăхăтра, ăнăçлăн пухса кĕртесси, государствăн ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли планне тултарасси—совет, парти тата комсомол организацийĕсен, колхозсен, МТС-сен, совхозсен тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хутшăнакан кашни çыннăн вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи чи пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать, çак задачăна пурнăçа кĕртни нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма пулăшать.»

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ **А. МАТВЕЕВ.**

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ **И. ЧАРЫКОВ.**

Çĕнĕ тырра—государствăна

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Мăн Улхашри «Красноармеец», Молгачкинăри «Молодая сила», Ворошилов ячĕпе тăракан, «Вперед», «Большевик», «Красный Атмал» колхозсенче авăн çапас ĕç пысăк хастарлăхпа пулса пырать. Кашни кунах вĕсем темиçешер гектар çинчи тырра çапаççĕ. Çапнă май тырра хатĕрлев пунктне леçсе парассине те лайăх организациленĕ. Колхозсен транспорт бригадисем государствăна тырă парас ĕçе пĕр чарăнусăр туса пыраççĕ.

Хатĕрлев пунктне çĕнĕ тырă тиенĕ лавсем килсех тăраççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз государствăна ыраш памалли плана ытлашшипех тултарчĕ. Çак кунсенче «Красноармеец» колхоз 4.555 килограмм, «Большевик» колхоз—1.301 килограмм, «Вперед» колхоз—1.109 килограмм çĕнĕ тырă пачĕç.

Колхоз государство умĕнче парăмлă мар

ЭЛĔК. Писĕпри «ВЛКСМ IX-мĕш съезчĕ» ятлă колхоз государство умĕнчи 1942 çулти обязательствăсене срокчен парса татрĕ. Тырă парас обязательствăна колхоз иртнĕ çулти тырра парса уборка пуçланиччене тултарнă. Çавăн пекех государствăна çăм, çăмарта, аш-какай та парса татнă.

Комсомолецсемпе ялти çамрăксем! Тырпулсене пухса кĕнĕ çĕрте лайăх ĕçлĕр, çулăмлă агитаторсем пулăр, тырпулсене кăтартуллăн пухса кĕртес ĕçре колхозниксене хавхалантарса пырăр!

Ака ĕçне срокра пурнăçлатпăр

Районри колхозсем кĕрсех тырă выраççĕ. Колхозниксен пĕр пайĕ фронтра пулин те, уйхир ĕçĕ пысăк хăвăртлăхсемпе сарăлса пырать. Кашни колхоз, колхозник тырпула пĕр тăккаламасăр, кĕске срокра пухса кĕме тăрăшать.

Малта пыракан колхозсем кĕрхи тырпула кĕске вăхăт хушшинчех пуçтарса кĕртрĕç. Халĕ вĕсем хĕрсех авăн çапаççĕ, çуртырписене выраççĕ.

Çак вăхăтрах колхозсем кĕраксине тухрĕç. Малта пыракан колхозсем ку ĕçе те организованно туса пыраççĕ. Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхозра акана тухнă кыççăн иккĕмĕш кунĕнчех 4 сеялкăпа акма тытăннă. Ку колхоз 140 гектар çĕртме тунă. Кунсăр пуçне ыраш тата тулă акмалли вырăна 4.500 тонна тислĕк, 2 тонна суперфосфат тăкнă.

«Красноармеец» колхоз та кĕрхи акана начар мар хатĕрленсе тухрĕ. Халĕ уйра çителĕклĕ тăранах машинăсем ĕçлеççĕ, ир пуçласа каçчен 7 сеялкăпа тырă акаççĕ. Ку колхозăн кăçал 700 гектара яхăн ыраша тулă акмалла. Çав вырăна вăл 4.700 тонна тислĕк тăкса халĕ сухаласа çÿренĕ.

Турханти «Комбинат», Мыслецри «Ударник», Пояндайкинăри «Новая жизнь», Молгачкинăри «Молодая сила» колхозсем те кĕрхи ака ĕçне вăхăтра тытăнчĕç. Вĕсм кĕрхи тырра акмалли лаптăксем çине сахал мар тислĕк тăкрĕç, çемçетсе тăчĕç. Акмалли вăрлăх та лайăх, ăна ятарласах лабораторире тĕрĕслесе пăхнă.

Анчах çакна та калас пулать: уйрăм колхозсенче ака ĕçне кирлĕ пек туса пымаççĕ-ха. «14 лет Октября», «Красный Атмал», «Красная звезда», «Борец» колхозсем ирхи çĕртме тунă вырăнсене ку таранччен те сухалама тытăнман. Çавна пула паян кун та кĕрхи акана тухман. Хăшпĕр колхозсенче ĕç инвентарĕсем çитмеççĕ.

Кăçал пирĕн районри колхозсем кĕрхи тырăсене, иртнĕ çултипе танлаштарсан, 200 гектара яхăн ытларах акмалла. Паллах, ăна эпир ăнăçлăнах пурнăçлатпăр. Районри колхозниксем çĕршыва, тăван Хĕрлĕ Çара ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, сĕт-çу парса тăма яланах хатĕр.

А. НИКИТИНА.
Çĕмĕрле районĕнчи çĕрĕс пайĕн главнăй агрономĕ

ĔÇ ДИСЦИПЛИНИНЕ ÇИРĔПЛЕТМЕЛЛЕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, августăн 18-мĕш. Халĕ, Хĕрлĕ Çарпа тăван çĕршыва апатçимĕç продукчĕсем çителĕклĕ парса тăмалла чухне, начар ĕçлеме никама та ирĕк паман. Çакна ĕнтĕ районри нумай колхозсем лайăх ăнланнă. Вĕсем августăн 17-мĕш тĕлне мĕнпурĕ 8.774 гектар çинчи тырра вырнă, 1344 гектар çинчи тырра çĕмеле е капана хывнă, 1.202 гектар çинчи тырра çапса илнĕ. Çавăн пекех çуртрисене те 495 гектар вырнă. Çав вăхăтрах «Дружба», Осоавиахим», «Звезда» колхозсем тырпула уйран пуçтарса кĕртес ĕçре пур енĕпе те юлса пыраççĕ. Колхоз председателĕсем хăйсен колхозĕсем кая юлса пынине ĕç вăйĕ çитменнипе ăнлантарма пăхаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Тырпула пухса кĕрес ĕçе малтанах тĕплĕн шутласа тунă план тăрăх туса пыракан колхозсенче, ĕç дисциплинине çирĕплетнĕ колхозсенче тырпула пухса кĕрес ĕç лайăх пырать. Çакна Чепкассинчи Калинин ячĕпе тăракан колхоз çирĕплетсе парать. Унта пучах пухас ĕçе те начар мар йĕркеленĕ, итем çине кÿрсе капана хывнă тырпула пушартан сыхласси те тивĕçлĕ вырăнта.

Вырса пуçтарнă тырпула пушартан е тĕрлĕ инкек-синкексенчен сыхлас ĕçе «Дружба», «Осоавиахим», «Звезда», «Ким», «Комбинат» колхозсенче начар йĕркеленĕ. Вĕсен хăш чухне итем çинче пыв та пулмасть.

МТС районри колхозсене икĕ комбайн кăларса янă. Анчах çав икĕ комбайн паянхи кунччен те мĕнпурĕ 23 гектар çеç вырнă. Вĕсене начар ремонтланă пирки ĕçре пĕринпе çеç усă кураççĕ. Çак комбайнсем йĕркеллĕ ĕçленĕ пулсан, кая юлакан колхозсен хирĕнчи тырпул та маларах пуçтарăнса пĕтнĕ пулĕччĕ.

Акана тухнăранпа районри колхозсем пурĕ 220 гектар ыраш акнă. Çÿлте асăннă кая юлса пыракан колхозсенче вара вăрлăхлăх тырра тин çапма пуçланă.

Çак кая юлакан колхозсен ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, стахановецсен, двухсотниксен йышне пысăклатассишĕн вăйлăнрах кĕрешмелле.

С. ПОРТНОВ,
Октябрьски райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Государствăна тырă парас план республикăра мĕнле пурнăçа кĕрсе пырать

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас обязательствăсене пурнăçа кĕртесси — кашни колхозăн пĕрремĕш тивĕçĕ пулса тăрать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире тĕштырăсемпе ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсене элеваторсемпе хатĕрлев пункчĕсене колхозсемпе совхозсенчен уборкăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах турттарма тытăнма хушнă. Çапса хатĕрленĕ тырпула хирте тата итемсем çинче пухăнса тăма памалла мар. Тĕштырă, кăшман, çĕрулми, пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсем турттарас тĕлĕшпе колхозсемпе совхозсене панă пилĕккунлăх заданисем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине контрольлесе тăмалла, çав пилĕккунлăх заданисене кашни колхозăн пурнăçа кĕртсе пырас пулать.

Августăн 15-мĕш тĕлне республикăри колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă парас плана 15,1 процент пурнăçа кĕртнĕ. Августăн 10-мĕш тĕлне çакă вăл 10,8 процент пулнă. Машинно-тракторнăй станцисем ĕçленĕшĕн натуроплата тÿлес заданисене 0,7 процент кăна пурнăçланă. Государствăна тырă пама пур районсем те тытăннă, Анчах та хăшпĕр районсем, сăмахран, Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă, Елчĕк тата Куславкка районĕсем государствăна тырă парас ĕçе çавтери вăрахăн туса пыраççĕ, вĕсем государствăна тĕштырă памалли плана мĕнле пурнăçа кĕртнине кăтартакан республикăри вăтам процентран чылай кая юлаççĕ.

МТС-сем ĕçленĕшĕн натуроплата тÿлемелли плана пачах та çителĕксĕр пурнăçа кĕртме тытăннă. Улатăр, Куславкка, Кувакино, Пăрачкав, тата ытти районсем августăн 15-мĕш тĕлне натуроплата шучĕпе пĕр килограмм та тырă паман.

Государствăна тырă памалли пилĕккунлăх заданисене республикăри чылай районсем пурнăçа кĕртеймен. Октябрьски, Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпÿ, Первомайски районсем кăна хатĕрлев пункчĕсене тĕштырра çирĕп график тăрăх леçсе тăнă. Октябрьски район, сăмахран, пилĕккунлăх задание 187,1 процент, Çĕрпÿ — 120,4 процент, Хĕрлĕ Чутай—113 процент пурнăçа кĕртнĕ. Пилĕккунлăх заданисене пурнăçа кĕртес ĕç çине Красноармейски, Улатăр, Пăрачкав тата Çĕмĕрле районĕсен руководителĕсем питех те ответлăхсăр пăхнă. Тырă турттармалли пилĕккунлăх графика пурнăçа кĕртме çав районсен пур майсем те пулнă пулин те, вĕсем çак ĕçе путлантарса лартнă. Çав районсем кая юлнă пирки государствăна тĕштырă памалли пилĕккунлăх плана пĕтĕмпе те 48,3 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Кая юлакан районсен руководителĕсем çакна ăнланса илме тивĕçлĕ: государствăна тĕш-тырă памалли графика кашни колхоз пурнăçа кĕртессишĕн вĕсем пĕтĕмĕшпех ответлă пулса тăраççĕ.

Государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă парас тата натуроплата тыррине парса татас плансене пурнăçа кĕртнипе пĕрлех, Хĕрлĕ Çар валли тăвакан тырă фондне те тĕштырă халех пама тытăнмалла. Республикăри чылай ялхуçалăх артелĕсем Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тĕштырă панă. Анчах нумай районсенче çак ĕçе манăçа хăварнă. Августăн 15-мĕш тĕлне Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тĕштырă парас ĕçе республикăри 4 район кăна—Шупашкар, Ишлей, Октябрьски тата Канаш районĕсем кăна тытăннă. Вĕсем 43 тонна тĕштырă панă.

Государствăна тырă парас ĕçĕн хăвăртлăхне çине тăрсах ÿстермелле. Тырă турттарас тĕлĕшпе паракан пилĕккунлăх заданисене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма тата государствăна ытти ялхуçалăх продукчĕсем те вăхăтра парса татма республикăри колхозсен пур майсем те çителĕклĕ.

Государствăна тырă парас ĕç анлăн пулса пырать

ЙĔПРЕÇ. Августăн 16-мĕш тĕлне районри колхозсем государствăна 331,6 тонна тырă панă.

Çĕнĕ тырра государствăна парас ĕç чылай колхозсенче аван пулса пырать. Районри 48 колхозран 21 колхоз тырă памалли графика ытлашшипех тултарса пурнăçлаççĕ. «Большевик» колхоз 218,2 центнер парса 268 процент пурнăçланă. Çавăн пекех «МОПР» колхоз 112 центнер парса 212 процент, «Коминтерн»—93,8 центнер парса 250 процент, «Красный водник» 263,3 центнер парса 156 процент, «Красный фронтовик»—219,6 центнер парса 310 процент пурнăçланă.

«Красный фронтовик» колхоз пилĕккунхи графика 69 центнер парса 3 кунта тултарнă. «Костер» колхоз икĕ пилĕккунлăхшăн тунă графика 6 кунта тултарнă.

Çак колхозсемпе пĕрлех районра государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçламаннисем те пур-ха. Малтанхи пилĕккунлăхра графика 2 колхоз пĕр процент та тултарман. Вĕсенчен: «Победа» (председателĕ Еремеев), Йĕпреçри (председателĕ Иванов), «Социализм» (председателĕ Моряков), «Молния» (председателĕ Николаев) колхозсем тырă пĕр килограмм та паманнисен шутне кĕреççĕ. Ку колхозсенче вара авăн çапас ĕç те вăрахăн пырать.

Çавăн пекех оборона фондне те кирлĕ пек хывма тытăнман.

Д. МИХАЙЛОВ.

Комсомолецсем хĕрлĕ обозсем организацилеççĕ

ВĂРМАР. Тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте комсомолецсемпе çамрăксем стахановла ĕçлеççĕ.

«Хĕрлĕ Шăхаль» колхозра Аркадий Николаев тата Михаил Тапинов жнейкăпа вырса кашни кун нормăна ирттерсе тултараççĕ. Вĕсем уйхиртех çĕркаçса ĕçлеççĕ, 7—8-шар гектар выраççĕ.

«Атнаш» колхозри комсомолецсем государствăна тырă пама хĕрлĕ обоз организациленĕ. Хатĕрлев пунктне хĕрлĕ обозпа кайса 20 центнер ыраш леçнĕ. Ку колхоз августăн 5-мĕш тĕлнех ыраш вырса пĕтернĕ.

Комсомолăн «Дружба» колхозри пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Х. Тимофеева юлташ) комсомолецсемпе çамрăксене пурне те уборкăра ĕçлеме явăçтарнă. Кунти комсомолецсем августăн 6-мĕшĕнче хĕрлĕ обоз организацилесе хатĕрлев пунктне 30 центнер тырă леçсе панă. Колхозра 34 агитатор, вĕсенчен 14 комсомолец. Вĕсем колхозниксене ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине ăнлантарса параççĕ, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа параççĕ. Агитаци ĕçне Я. Семенов, Х. Тимофеева тата А. Мясникова юлташсем аван туса пыраççĕ. Агитаторсем икĕ колхозри стена хаçатне икĕ номер, бригадăсенчи «боевой листоксене» сакăр номер кăларнă.

«Большевик» колхозри комсомолкăсем А. Владимирова, Т. Владимирова тата Г. Владимирова юлташсем çурлапа тырă вырнă çĕрте кашни кун нормăна 275—280 процент тултарса ĕçлеççĕ. «Красные Шептахи» колхозри комсомолка Агафия Алексеева кулленхи ĕç нормине ирттерсе тултарса пырать, вăл хăйĕн лайăх ĕçĕпе ытти колхозниксене пример кăтартать. Çав колхозрах уборкăра стахановла ĕçлекен çамрăксем А. Васильевпа Н. Георгиев çак кунсенче ВЛКСМ членне кĕме заявленисем панă.

Шкул ачисем те уборкăра аван ĕçлеççĕ. «Большевик» колхозра комсомолец Н. Бородков, шкулта 7-мĕш класра вĕренекенскер, 4-мĕш бригадăн бригадирĕ пулса ĕçлет. Вăл паянхи куна 200 ĕçкунĕ тунă. Унăн бригади колхозра лайăх тĕслĕхсем кăтартать.

Чупайри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 137 ача пучах пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

Комсомолăн пуçламĕш организацийĕ пуçарнипе «Парижская Коммуна» колхозра социализмлă ăмăртура мала тухнă бригадăна пама куçса çÿрекен хĕрлĕ ялав тунă. Ыраш вырассипе Н. Иванов бригади мала тухнă, куçса çÿрекен хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулнă.

Уборкăра ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче ĕçлеме районра агитбригада организациленĕ. Унта 0 комсомолец, бригадăна Н. Бурмистрова юлташ ертсе пырать. Çак бригада тырă вырнă çĕрте çÿресе политикăллă калаçусем ирттерет, комсомол организацисене практикăллă пулăшу парать.

ВЛКСМ районри организацийĕсенчи кашни комсомолецах тырпула кĕске вăхăт хушшинче пĕр тăкаксăр пухса кĕртессишĕн тăрăшса ĕçлет

ЗАЛЕВСКИЙ,
ВЛКСМ Вăрмар райкомĕн секретарĕ.

Г-н Черчилльпе г-н Гарриманăн заявленийĕсем

Мускава килсен г-н Черчилль тата г-Гарриман çакăн пек заявленисем тунă, вĕсене кинопленка çине çырнă:

Г-Н ЧЕРЧИЛЛĔН ЗАЯВЛЕНИЙĔ

«Пире темĕн тĕрлĕ асапсем, темĕн тĕрлĕ йывăрлăхсем кĕтсе тăраççĕ пулин те, эпир алла-аллăн тăрса малалла кĕрешме, гитлерла режимăн юлашки тĕпренчĕкĕсем тасаличчен, килес вăхăтсемшĕн асăнмалăх пример тата асăрхаттару пулса юлса тĕппипех тасаличчен, юлташсем пек тата тăвансем пек алла-аллăн тăрса малалла кĕрешме çирĕп те хатĕр тăратпăр».

Г-Н ГАРРИМАНĂН ЗАЯВЛЕНИЙĔ

«Вăрçăн çак татăклă тапхăрĕнче Великобританин премьерĕ Мускава паллă ĕçсемпе килнĕ чухне США президенчĕ мана унпа пĕрле пулма хушрĕ.

США президенчĕ кунта Черчилль йышăнакан мĕнпур решенисем çумне пĕрлешет.

Америка фронтра вырăссемпе пĕрле алла-аллăн тăрĕ».

Г-н Черчилль И. В. Сталин патне янă телеграмма

Эсир мана юлташла кĕтсе илсе хăналанăшăн Сире килсе тухнă майпа усă курса тав тăватăп. Эпĕ хам Мускавра пулнишĕн питĕ кăмăллă, пĕрремĕшĕнчен, манăн хамăн шухăшсене каласа памаллаччĕ; иккĕмĕшĕнчен, пирĕн ĕçе пирĕн хушăри тачă çыхăну усăллăн пулăшса пырассине эпĕ шанатăп. Тархасшăн, г-н Молотова манран салам калăр.

—⊙—

Хĕрлĕ ялава алăран вĕçертес мар тесе

КАНАШ, августăн 18-мĕш. (Телефонпа). Паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен лайăхрах ĕçлемелле—çакăн пек вагонсем юсакан заводри стахановецсен ĕмĕчĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне кунран-кун ÿстерсе пыраççĕ. Осколовский юлташ ертсе пыракан цехри станочниксем Паясуловпа Рылина юлташсем 2—2,5-шер норма тултаракан пулчĕç. Сварщиксем Орловпа Дьяченко юлташсем пĕрмаях виçшер норма тултараççĕ. Муханов, Кисин, Дмитриев, Данилов слесарьсем питех те кирлĕ детале тунă çĕрте ĕçлесе, ĕç тухăçлăхне 4—5 хут ÿстерчĕç.

Строительнăй цехри Сыровпа Цикленко юлташсем монтаж тăвакан бригадисем июль уйăхĕнче нормăран икĕ хут тухăçлăрах ĕçленĕ. Вĕсем çак тухăçлăха ку уйăхра та чакармаççĕ. Кăмака тăвакан Кабанов юлташ нормăна 250 процент, электромонтер Киреев юлташ — 200 процент, плотник Ложкина юлташ — 150 процент тултараççĕ. Столярсем Воротновпа Дубина, плотниксем Зайцевпа Полетаев, подсобнăй рабочисем Ковалевпа Николаев юлташсем те нормăран чылай тухăçлăрах ĕçлеççĕ.

Заводри стахановецсем хăйсен тухăçлă ĕçĕпе Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне алăран вĕçертес марришĕн кĕрешеççĕ.

ФЗО шкулĕнче занятисем пуçланчĕç

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 18-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Çак кунсенче хулари ФЗО шкулĕнче занятисем пуçланчĕç. Çĕнĕрен вĕренме илнĕ çĕршер ачасенчен квалификациллĕ столярсем, плотниксем, слесарьсем, токарьсем тата электромонтерсем хатĕрлеççĕ. Вĕсене вĕренме кирлĕ условисене тунă: общежитисем пур, столовăй ĕçлет, мастерсем, вĕренÿ пособийĕсем çителĕклĕ.

Анчах çакна палăртмалла: Элĕк, Советски районсем тата Çĕмĕрле хули ачасене вăхăтра уйăрса паман пирки занятисем эрне кая юлса пуçĕнчĕç.

Х. ЛИСИН.

Казахстанра нефть кăларасси ÿссе пырать

Казахстан нефтяникĕсем горючи кăларассине уйăхран уйăхах ÿстерсе пыраççĕ. Çĕнĕ скважинăсем строя кĕреççĕ.

Нефть кăларасси çавăн пекех тата кивĕ скважинăсене çĕнĕ меслетсемпе ĕçлеттернипе тата оборудованине çĕнетсе лайăхлатса пынипе те ÿсет. Авров геологăн сĕнĕвĕпе пĕр скважинăпах пĕр йышши темиçе горизонтран нефть кăлармалла тунă. Çавнашкал йĕркеленĕ 220 скважина çĕршыва çĕнĕрен 20 пин тонна нефть хушса панă. «Кулсары» промыслинче мастер Жумагалев тата инженер Коплан юлташсем плунжернăй лифт туса йĕркеленĕ. Çав приборсене лартнă скважинăсем халиччен хинчен 1,5—2 хут ытларах нефть параççĕ.

(ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Августăн 17-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Августăн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче, савăн пекех тата **Минеральные Воды, Краснодар** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Августăн 16-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 ытла танкĕпе бронемашинине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складĕсене тата горючин складне сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç оборонăллă хĕрÿллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски часть хÿтĕлесе тăракан участок çине нимĕçсем пехотăн пысăк вăйĕсене кĕртсе янă тата вĕсене 100 танкпа авиаци пулăшса пынă. Çав çапăçусенче тăшмана чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен пысăк сиен кÿнĕ. Юлашки кунсенче çак участокра нимĕçсен 30 танкне тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 5.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен персе нимĕçсен 3 самолетне ÿкернĕ.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хевелтухăçнерехри районра пирĕн танксен пĕр подразделенийĕ нимĕçсен 7 танкне пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан К. пунктшăн пынă çапăçура пирĕн боецсем 250 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсенне оруди, 5 пулемет, 2 миномет, 20 автомат тата винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Краснодар районĕнче çапăçусем малалла пулса пынă. Нимĕçсем Кубань шывĕ урлă каçнă вырăнта, халăх пурăнакан 2 пункт патĕнче, уйрăмах вăйлă çапăçусем пынă. Кавалерин Н-ски чаçĕ, танкистсемпе пĕрле пулса, нимĕçсен мотопехотин колоннине кĕтмен çĕртен атакăланă. Хаяр çапăçура нимĕçсен 20 танкне, 20 автомашинине тата противникăн пехотине 2 батальона çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн часть противникăн атакине сирсе пăрахса нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Минеральные Воды районĕнче пирĕн войскăсем, противникăн атакисене сире-сире пăрахса, оборонăллă çапăçусем туса пынă.

* * *

Воронежран кăнтăрарах вырăнта Донăн хĕвеланăç сыранĕнче халăх пурăнакан пĕр пунктра урамри çапăçусем малалла пулса пынă. Нимĕçсем çав вырăна пысăк вăйсем илсе пынă. Пирĕн чаçсем противника пысăк сиен кÿреççĕ.

* * *

Çак кунсенче нимĕç авиацийĕ пирĕн Хура тинĕсри çар базисенчен пĕрин çине массăллăн вĕçсе пырса тапăнма хăтланнă. Противникăн бомбардировщикĕсемпе истребителĕсене хирĕç пирĕн Душин юлташ командир пулса тăракан чаçри летчиксем çĕкленнĕ. Пирĕн çав база патне пымалли вырăнсенчи сывлăшри çапăçура тăшманăн «Хейнкель—111» йышши 7 самолетне, «Юнкерс—88» йышши 7 самолетне, «Мессершмитт—110» йышши 3 самолетне тата «Мессершмитт—109» йышши 3 самолетне персе ÿкернĕ. Унсăр пуçне зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсен «Хейнкель—111» йышши 3 самолетне пĕтерсе тăкнă, 5 самолетне çĕмĕрнĕ. Пĕтĕмпе нимĕçсен 23 самолетне пĕтерсе тăкнă, 5 самолетне çĕмĕрнĕ. Нимĕçсем хăйсен бомбисене нимĕн йĕркесĕр пăрахса граждăнла халăха кăшт ах сиенленĕ. Çар объекчĕсем сиенленмен.

* * *

Нимĕçсен 100-мĕш пехотнăй дивизийĕн 427-мĕш полкĕнчи 6-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Иоганн Алмейер çапла каласа панă: «Пирĕн дивизи питĕ пысăк çухатусем тÿсрĕ. Дивизин 54-мĕш пехотнăй полкне çапса аркатса пĕтерсе тăкни çинчен пĕр офицер тепĕр офицера каласа панине эпĕ хам илтрĕм. Çав полкран мĕнпурĕ те пĕр рота çеç юлнă, вăл та пулин туллимар рота. Батальонсемпе полксенчи связистсем те кайран çакна çирĕплетсе каласа пачĕç, вĕсем ĕнтĕ мĕн пулса иртнине витĕрех пĕлсе тăраççĕ. Юлашки çапăçура пирĕн ротăна çапса аркатрĕç. Çакăн хыççăн вырăссен танкĕсем пырса кĕчĕç те пирĕнтен нихăшĕ те тарма пултараймарĕ. Чĕрĕ юлнисем пурте тыткăна парăнчĕç».

* * *

Нимĕç ефрейторĕ Алоиз Фрам çумĕнче вăл Грац хулине хăйĕн ашшĕ Иосеф Фрам патне яма ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Çав çырура çапла каланă: «Партизансем пире пысăк сиен кÿреççĕ, пачах та канăç памаççĕ. Тылра кашни кунах е кĕпер, е поезд сывлăшалла сирпĕнсе каять. Халĕ партизансене хирĕç кĕрешме войскăсем нумай янă. Партизансене тытас тесе Белоруссин вăрманĕсенче эпир ĕнтĕ пĕр уйăх хушши йĕрлесе çÿретпĕр. Анчах та вĕсене тытма май çук. Партизансем кашни сукмаках пĕлсе тăраççĕ. Пĕррехинче эпир вĕсем патне çывăхах пырса çитнĕччĕ, анчах та партизансем патнелле вĕтлĕх вăрман витĕр çывхарса пынă чухне, вĕсем пирĕн çине çав тери вăйлăн пеме тытăнчĕç. Çаксем пурте пире кунта хăратса тăраççĕ. Вырăссем пире хирĕç çавăн пек нумай çулсем хушши çапăçма пултараççĕ».

* * *

Нимĕçсемпе венгер оккупанчĕсем, Сумы облаçĕнчи Новая Слобода ялĕнче пурăнакан çынсене тискеррĕн асаплантарса пĕтернĕ. Фашистла палачсем çемьи-çемьипе касса вакланă, советăн 580 граждăнне, вăл шутра хĕрарăмсемпе ачасене нумай асаплантарса, персе вĕлернĕ. Оккупантсем 670 çурта тата ытти тĕрлĕ çурт-йĕрсене çунтарса янă.

* * *

Гитлеровецсем тыткăна илнĕ французсенчен çавтери тискеррĕн мăшкăлласçĕ, вĕсене выçă усраса асаплантараççĕ, питĕ йывăр ĕçсем ĕçлеттереççĕ. Юлашки вăхăтра нимĕçсен влаçĕсем тыткăна илнĕ французсен пĕр ушкăнне ирĕке кăларнă пулнă. Çавсенчен нумайĕшĕсем тыткăнра пурăннă чухне ĕçе юрăхсăр пулса юлнă. Лилль хулине таврăннă çавăн пек 50 çынран пурте инвалидсем е йывăр чирлĕ çынсем.

Августăн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿрен

Августăн 18-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Клетскаяран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районсенче, çавăн пекех тата **Минеральные Воды, Краснодар** районĕсенче çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Клетскаяран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри районра пирĕн войскăсем противника хирĕç оборонăллă хĕрÿллĕ çапăçусем туса пынă. Совет артиллерийĕ тăшмана пысăк сиен кÿрет. Çапăçăвăн темиçе кунĕнче пĕр подразделенири артиллеристсем нимĕçсен пехотине 5 ротăна çити, 12 орудине прислугисемпе пĕрлех, миномётсен 4 батарейине тата сăнаса тăмалли пункта пĕтерсе тăкнă. Н-ски стрелковăй чаçри боецсем противникăн пирĕн оборонăна савăлланса кĕнĕ йышлăрах вăйĕсене хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ. Пĕр талăк хушшинче вĕсем тăшманăн 4 атакине сирсе пăрахнă тата 1.500 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра, халăх пурăнакан пĕр пункт патĕнчи çапăçура румынсен пехотин батальонне çапса аркатнă. Пирĕн боецсем румын салтакĕсене тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски часть 200 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Артиллерирен персе нимĕçсен 6 танкне çĕмĕрнĕ, пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краснодар районĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç çапăçнă. Пĕр участокра пирĕн артиллеристсемпе бронебойщиксем тăшманăн атакине сирсе пăрахнă. 12 танк çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра Н-ски чаçри танкистсем хаяр çапăçура 600 çити гитлеровеца тата противникăн 20 танкне пĕтерсе тăкнă.

Минеральные Воды районĕнче пирĕн чаçсем противникăн войскисен атакисене сире-сире пăрахнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса иртнĕ.

Свиридов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçсем, темиçе атака туса, нимĕçсене чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен сиен кÿнĕ. Латкин тата Васильев красноармеецсем, тăшманăн блиндажĕсене атакăланă чухне, 14 нимĕçе чиксе пăрахнă. Старши сержант Догадин танксене хирĕç пемелли пăшалран персе нимĕçсен «Юнкерс—52» йышши транспортнăй самолетне ÿкернĕ.

* * *

Нимĕçсен 227-мĕш пехотнăй полкĕн 14-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ оберефрейтор Рудольф Циглер çапла каласа панă: «Юлашки вăхăтра офицерсем пире çапла калатчĕç: чаçсен командирĕсене салтаксем валли апат-çимĕç вырăнтах тупма хушса командовани приказ панă, тетчĕç. Офицерсем куншăн ĕнтĕ çакна кăтартса параççĕ: апат-çимĕç нормине уйăхран уйăхах чакарса пыракан Германия фронта апат-çимĕç парса тăма пултараймасть. Пачах та урăхла, командовани фронтран тыла тырпул, аш-какай тата ытти продуктсем парса тăма ыйтать. Çакнашкал калаçусем хыççăн салтаксем халăха тата та ытларах çаратма тытăнчĕç. Ятарласа уйăрнă ушкăнсем ялсем тăрăх ухтарса çÿреççĕ, вĕсен алли айне мĕн лекет, çавсене пурне те тытса илеççĕ».

* * *

Польша партизанĕсен Краков районĕнче кĕрешекен отрячĕ 70 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Краков—Мехув линийĕ çинче партизансем чугунçула виçĕ тĕлте çĕмĕрнĕ. Поездсем çÿресси çулăн çав участокĕнче икĕ кун хушши чарăнса тăнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ВКП(б) Канаш хула комитечĕн пленумĕ

КАНАШ, августăн 18-мĕш. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Партин Канаш райкомĕн пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум вичĕ ыйту сÿтсе-яврĕ: ВКП(б) Канаш хула организацийĕнче 1942 çулти июньпе июль уйăхĕсенче партие çĕнĕ членсем илес ĕç мĕнле пыни çинчен, хулана валли пахча-çимĕç хатĕрлес ĕç çинчен тата организациллĕ ыйтусем.

Юлашки икĕ уйăх хушшинче Канаш хулинчи парторганизацире партине илес ĕç мĕнле пыни çинчен хула комитечĕн секретарĕ А. Данилов юлташ доклад туса пачĕ.

— Вăрçăн хаяр кунĕсенче,—тет докладчик,—пирĕн халăхăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухассишĕн производствăра тăрăшса ĕçлекенсем, производствăри стахановецсем большевиксен партине кĕреççĕ. Июньпе июль уйăхĕсенче парти ретне кĕнисен шутĕнче—вагонсем юсакан заводри стахановец Матузенко, токарь Бельский, депори слесарь Чеботарев т. ыт. те. Çак икĕ уйăх хушшинче хула парторганизацийĕ ВКП(б) ретне пĕтĕмпе 24 çын илнĕ, вăл шутран ВКП(б) членĕн кандидатне 14 çын илнĕ. Партие çĕнĕрен кĕнисем хушшинче 7 хĕрарăм, 11 комсомолец.

Хула комитечĕн пленумĕ июньпе июль уйăхĕсенче партие çĕнĕ членсем илес ĕç çителĕксĕр пулса пынине палăртрĕ. Предпрятисемпе учрежденисенче производствăллă çĕкленÿ вăйланса, стахановецсен йышĕ ÿссе пырать. Çав вăхăтрах партин хула организацийĕ ВКП(б) ретне çĕнĕ çынсене июньпе июль уйăхĕсенче сахал илнĕ.

Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем партие илес ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхман, партие илме ыйтса панă заявленисене пăхса тухас ĕçе вăраха яни пулнă. Сăмахран, пиравăр фабрикинчи парторганизацине комсомолец Алексеев парти ретне илме ыйтса апрелĕн 20-мĕшĕнче заявлени панă. Ку заявлени пуçламĕш парторганизаци майăн 16-мĕшĕнче кăна пăхса тухнă. Çак материалсем хула комитетне июнĕн 5-мĕшĕнче кăна çитнĕ. Чугунçул çинчи милицин оперативнăй пунктĕнчи парторганизацире те М. Волковпа М. Егоров панă заявленисене пăхса тухмасăр нумай вăхăт хушши выртнарнă.

Вагонсем юсакан заводри парторганизацире мартпа май уйăхĕнче парти ретне 19 çын илнĕ пулсан, июньпе июль уйăхĕсенче 12 çын, вăл шутран ВКП(б) членĕн кандидатне 7 çын кăна илнĕ. Цехсенчи парторганизацисем нумайăшĕ июньпе июль уйăхĕсенче парти ретне пĕр çын та илмен.

Хула парторганизацинче ВКП(б) кандидачĕсем хушшинче çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вагонсем юсакан заводри парторганизацинче 54 кандидат пулсан, 42 кандидатăн стаж тухнă. Кандидатра тăмалли стаж тухнисем ытти парторганизацисенче те йышлă. Вĕсене ВКП(б) членне хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе пуçламĕш парторганизацисем сахал ĕçлеççĕ.

Хулана валли пахча-çимĕç хатĕрлес ĕç çинчен хула совет исполкомĕн председателĕ Тимофеев юлташ доклад туса пачĕ. Хулари предприятисем чылайĕшĕ подсобнăй хуçалăхсем тунă, рабочисемпе служащисем 561 гектар çине хăйсене валли пахча-çимĕç лартса хăварнă. Анчах ку тĕлĕшпе депо коллективĕ (парторганизаци секретарĕ Сергеев, профком председателĕ Евтихеев) хăйне панă çĕрпе усă курман.

Пленум çакна палăртрĕ: пахча-çимĕç хатĕрлес тĕлĕшпе суту-илÿ тата хуçалăхлă организацисен плансене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртмелле, пахча-çимĕç тăратма колхозсемпе договорсем тумалла. Канашторг, трансторгпит, чугунçул çинчи буфет пахча-çимĕç хатĕрлес тĕлĕшпе колхозсемпе договорсем туман. Çавна пула халиччен те хăяр тăварламан. Пахча-çимĕçе усрама хранилищĕсене, катка-пичкесене хатĕрлемен.

Пленум пахча-çимĕç тăвас тата хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтерме хушса решени йышăнчĕ.

Пленум организациллĕ ыйту пăхса тухрĕ. ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ М. Репкин юлташ ВКП(б) Чăваш Обкомне ĕçлеме куçнă пирки пленум ăна çав ĕçрен хăтарчĕ. Пленум ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма М. В. Лисин юлташа суйларĕ

Решенисем пурнăçа кĕнине тĕрĕслемен çĕрте

Иштереккассинчи «Клевер» колхозри (Ишлей районĕ) пуçламĕш парторганизаци уборка ыйтăвĕсене сÿтсе-явман теме çук. Уборкăна хатĕрленес тата ирттерес ыйтăва парторганизаци августăн 1-мĕшĕнче те пăхса тухнă. Çав пухура коммунистсем тырпулсене вырас ĕçре жнейкăсемпе туллин усă курмаллине, кашни бригадăра (колхозра виçĕ бригада) кĕреплеллĕ çавасем 10 таран пулмаллине палăртса решени йышăннă. Анчах «Клевер» колхозри парторганизаци хăйĕн решенине начар пурнăçа кĕртсе пырать.

Колхоз пĕр тыррисене 7 кун хушшинче пухса кĕртмелле тесе парторганизаци йышăннă. Çав вăхăтрах колхоз планĕпе кĕртыррисем вырасси 11 кун хушши пымалла. Колхоз августăн 4-мĕшĕнче тырă вырма тухнă. Пĕтĕмпе 114 гектар кĕртырри вырмалла, ăна паян кун та вырса пĕтермен.

Уборкăри ĕçсем çавăн пек начар пулса пынин сăлтавĕ мĕнре-ха?

Колхозăн икĕ жнейка пур. Вĕсем иккĕшĕ те юсавлă. Анчах вĕсемпе пĕр утăм çинчи тырра та вырман. Колхозăпе 30 çава хатĕрлес вырăнне, уборкăра кĕреплеллĕ 8 çавапа кăна ĕçлеççĕ. Пуçламĕш парторганизаци колхозниксем хушшинче политикăллă ĕçе туса пыма агитаторсене уйăрнă. Анчах агитаторсем çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Колхоз председателĕ, ВКП(б) членĕ Кочергов юлташ агитациллĕ ĕçе йĕркелесе яма тăрăшмасть. Ку колхоз паянхи куна та Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнман.

Колхозра ăмăртса ĕçлени çук. ВКП(б) членĕн кандидачĕ П. Башмаков юлташ ертсе пыракан бригада колхозăн ытти бригадисенчен нимĕнпе те палăрса тăмасть, малта пымасть. Парторганизаци секретарĕ Иванова юлташ тÿрремĕнех колхоз производствинче ĕçлет. Анчах вăл тырă вырнă çĕрте ытти колхозниксемшĕн кăтартуллă ĕçлеймест.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене тултарма васкамасть. 1942 çулшăн государствăна кивĕ тырă 3,81 центнер панă. Çĕнĕ тырра хăвăртрах çапса хатĕрлев пунктне леçсе парас ĕçе организацилеме тăрăшакан çук. Колхоз государствăна ытти ялхуçалăх продукчĕсене парассипе те кая юлнă.

Тивĕшри территориальнăй пуçламĕш парторганизацире пухусем вăхăтра пулса иртеççĕ, вĕсенче лайăх решенисем сахал мар йышăнаççĕ. Анчах пуçламĕш парторганизацин секретарĕ, вăлах ялсовет исполкомĕн председателĕ Волков юлташ парти пухăвĕсен решенийĕсем мĕнле пурнăçа кĕнине тĕрĕслесе пымасть. Çавна пула ялсоветĕнчи колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсенче юлаççĕ.

Платонов юлташ, ВКП(б) членĕн кандидачĕ, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн председателĕнче ĕçлет. Колхоз тырă вырас тĕлĕшпе кая юлнă, кĕлте турттарса капана хывма тытăнман. Çапах та колхозăн икĕ жнейкине усăсăр лартаççĕ, вĕсемпе тырă вырмаççĕ, кĕреплеллĕ çавасем туман. Тырă вырнă çĕрте лайăх ĕçлекенсене палăртмаççĕ. Учет ĕçĕ йĕркеллĕ мар. Колхозра социализмлă ăмăртăва организацилемен.

Çак парторганизацинче тăракансем—ВКП(б) членĕ Михайловăпа ВКП(б) членĕн кандидачĕ Краснова юлташсем Тивĕшри колхозра уйхирте ĕçлеççĕ. Вĕсем тырă вырнă çĕрте ытти колхозниксене пример кăтартса пыраймаççĕ, ертсе пырас вырăна йышăнман. Парторганизаци вĕсене колхозниксем хушшинче хаçатсем вуласа парас ĕçе хушнă. Анчах вĕсем çак ĕçе начар туса пыраççĕ.

Çак пуçламĕш парторганизацисенче ВКП(б) Ишлей райкомĕн работникĕсем пулман теме çук. Вĕсем пырса çÿренĕ. Анчах пуçламĕш организацисен секретарĕсене конкретлă пулăшу сахал панă. Çавна пула уборкăра мĕнпур вăя хурса ĕçлеме колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилес задачăна пурнăça кĕртес тĕлĕшпе çак парторганизацисем çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Ф. ДМИТРИЕВ.

Вăйлă тырпулшăн пыракан Пĕтĕм Союзри ăмăртăва пуçарса яракансем патĕнче

Новосибирск облаçĕнчи Чистоозернăй районри «Путь Крестьянина» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсем 2.800 гектар çинчи тĕштырăсене 16 кун хушшинче пухса кĕме тата государство умĕнчи хăйсен обязательствисене срокченех тултарма сăмах панă. Вăйлă тырпулшăн пыракан Пĕтĕм Союзри ăмăртăва пуçарса яракансем хăйсен сăмахне çирĕп тытаççĕ. Вĕсем тĕштырăсене 1.000 гектара яхăн вырнă та ĕнтĕ. Халĕ хĕрсех çурхи тулăпа сĕлле выраççĕ. Государствăна малтанхи тырра 170 центнер панă.

Колхозниксем тырпула тăккаланине хирĕç кытă кĕрешеççĕ. Иртнĕ çул çак ĕç çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхнă пулсан, колхоз кашни гектартан çĕнĕрен 12-шер пăт тырă пухса илнĕ пулĕччĕ. Кăçал колхозниксем тырпула пĕр пучах юлмиччен пухса кĕртме шут тытнă. (ТАСС)

Киргизире нумай çул хушши ÿсекен тулă акаççĕ

Фрунзе облаçĕнчи Кантски районри колхозсенче нумай çул ÿсекен 34.085 номерлĕ тулла ăнăçлăн акса ÿстереççĕ. Иртнĕ çул çав тулла пĕрре акса икĕ хутчен вырса илнĕ. Тулă кăмпа чирĕсене парăнмасть, унран çăнăхпа çăкăр лайăх пулать.

Нумай çул ÿсекен тулла кĕркунне татах та ытларах акса хăвараççĕ. (ТАСС).

Пирĕн земляксем

Вилĕмсĕр вилĕм

> «Если быть концу—значит, надо взять его таким, как лучше нельзя...»
>
> **Д. Фурманов.**

Владимир Иванович Арбузов хамăр тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн юрататчĕ, унăн тăшманĕсене ылханса тарăхатчĕ. Пурнăçа вĕçĕ-хĕррисĕр юратни, тăшмана пĕтĕм чун-чĕререн тарăхни, вилĕмрен хăраса тăманни—Арбузовăн чĕрери шухăш-кăмăлĕсем.

Нимĕç оккупанчĕсене пĕтĕмпех çапса аркатасси, çĕршыва фашистла çăхансенчен тасатасси—унăн пĕртен пĕр ĕмĕчĕ пулнă. Çак шухăш-ĕмĕтпе вăл фронта килнĕ.

Елчĕк районĕнчи «Малое Байдеряково» колхозра вунă çул хушши учитель пулса ĕçленĕ Владимир Арбузова вăйлă хĕçпăшал — станковăй пулемет шанса пачĕç. Вăл пулеметран пеме çине тăрса вĕренчĕ. Организаторла пултарулăх пуррине кура, ăна часах отделени командирĕ турĕç.

Боецсем, командирсем тата политработниксем Арбузова мухтаса хисеплеççĕ. Кĕçĕн командир куллен-кун опыт пухса, ÿссе пырать. Батальон военкомĕ Березин юлташ унăн мухтавлă та пархатарлă ĕçĕсене аса илсе çапла калать:

— Кĕçĕн командир Арбузов пирĕн подразделенире вăйлă агитаторсенчен пĕри пулсаччĕ. Чăваш республикинчен килнĕ боецсем хушшинче агитаци ĕçне туса пыратчĕ. Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн 130 номерлĕ приказне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе уйрăмах вăйлă ĕçлерĕ. Хăйĕн отделенийĕнчи пулеметчиксене çар ĕçне, станковăй пулемета тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсене лайăх вĕрентрĕ. Командовани ăна темиçе хут та тав тунă.

Владимир Арбузов нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешме çине тăрса, тĕплĕн хатĕрленчĕ. Арбузов хăйне панă хĕçпăшала, хăйĕн боевой юлташĕсене лайăх шанса тăнă.

— Çакăн пек вăйлă хĕçпăшалпа, çакăн пек боевой юлташсемпе тăшмана çĕнтеретпĕрех,—тетчĕ вăл. Хăйĕн юлташĕсене çĕнтерÿ тума хавхалантаратчĕ.

Хамăр тăван çĕршыва, коммунистсен партине пĕтĕм чĕререн юратни—тăшмана хирĕç хаяррăн кĕрешме ăна вăй-хал панă. Наступление каяс умĕн подразделенири боецсемпе командирсен тата политработниксен митингĕ пулчĕ. Паллă агитатор, пултарулла кĕçĕн командир сержант Арбузов митингра сăмах каларĕ.

— Этемлĕхĕн тăшманĕсене—нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн та хаяррăн кĕрешме пулатăп. Манăн отделени умне командовани лартнă задачăна ăнăçлă пурнăçа кĕртетĕп...

Наступление тухса каяс умĕн вăл хăйĕн юлташĕсем патне, хăйсен колхозне:—Тăван çĕршывшăн хамăн вăя тата кирлех пулсан, хамăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешетĕп,—тесе çыру çырчĕ

Наступление тухса каяс умĕн вăл парторг патне заявлени илсе пычĕ. «Мана Ленин—Сталин парти ретне илме ыйтатăп. Коммунистăн чаплă ятне тивĕçлĕ пулма, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешсе пыма сăмах паратăп...» Ăна парти ретне илчĕç.

Вăрçăра вăл тăван çĕршыва тата Ленин—Сталин партине чĕререн парăнса çапăçнине кăтартрĕ. Рядовой боецсем, унăн примерĕпе хавхаланса, тăшмана хирĕç паттăррăн та хаяррăн кĕрешрĕç. Пулемет расчечĕ тăшман çине тапăнса пыракан хамăрăн пехотăна вăйлăн пулăшрĕ. Траншейăсемпе блиндажсенче пытанса, тăшманăн пулеметчикĕсемпе автоматчикĕсене 25 çынна вĕлернĕ. Чылай огневой точкăсене пусарса лартнă.

... Фашистсем миномётсенчен хытăрах та хытăрах персе тăма тытăнчĕç. Аçта кирлĕ-унта мина шартлата-шартлата çÿрăлни илтĕнет. Сержант хăрамасть. Тăшмана курайманни, тăван çĕршыва пĕтĕм чĕререн юратни хаяррăн кĕрешме вăй-хал парать. Вунă çул хушши учитель пулса ĕçлесе, çĕршер ача вĕрентсе кăларнă... Килте арăм, ачасем... Гитлер ачасен телейне таптаса тăкасшăн. Лайăх пурнăçа пĕтерсе хума памалла мар. Тăшмана пуçĕпех çапса çĕмĕрмелле...

Мина пулеметран инçех мар ÿксе çурăлчĕ. Тăпра купи, осколоксем сывлăшалла сирпĕнчĕç. Пулемет расчечĕн пĕрремĕш номерĕ Самдолов хытă аманчĕ. Ăна санитарсем носилка çине хурса çĕклесе кайрĕç. Пулемета кĕçĕн командир Арбузов алла илчĕ. Вăл фашистла çĕлен-калтасене шăла-шăла тăкать.

Осколок Арбузова та амантрĕ. Патриот суран ыратнине пăхмасăр паттăррăн кĕрешет. Икĕ дзот çине гранатăсем ывăтрĕ. Сывлăш янăраса кайрĕ. Тăшман салтакĕсем хăйсен дзотĕнче тăпрапа тата йывăç турпасĕсемпе витĕнсе путланчĕç.

Осколок Арбузовăн пуçне пырса тиврĕ. Сержант-герой пĕр хушă ним пĕлмесĕр антраса выртрĕ. Унтан тăна кĕчĕ те, ун куçĕ умне фашистсем пухса тăчĕç. Инçех мар вĕсем, героя тыткăна илесшĕн.

Арбузов юлашки вăй-халне пухса, тăшман çине граната ывăтса ячĕ. 3—4 фашист çавăнтах тăрăнса кайрĕç.

— Çапса çĕмĕрĕр тăшмансене!...

Çакă пулчĕ Арбузовăн юлашки сăмахĕ. Геройăн чĕрийĕ ĕçлеме чарăнчĕ.

Тăшмана хирĕç вăл пурнăçне шеллемесĕр кĕрешрĕ. Сержант Владимир Иванович Арбузов геройсен вилĕмĕпе вилчĕ. Анчах унăн ĕçĕ вилмен. Çĕршер боецсемпе командирсем, тăшмана хирĕç Арбузов пек кĕрешсе тăван çĕршыва фашистла ирсĕрсенчен тасатаççĕ.

Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хăюлăхпа паттăрлăх кăтартса кĕрешнĕшĕн командовани Арбузова правительство наградине пама тăратрĕ.

Кĕçĕн политрук Т. МАЙОРОВ.

Колхозри ватă мельник

Михал мучие почтальон кăвак конвертлă çыру пырса панă. Ватăлнă пирки мучин куçĕсем витĕрех курмаççĕ, çавăнпа та вăл çырăва ман пата илсе пычĕ.

— Вуласа пар-ха, Миша. Пăхатăп, пăхатăп та, çак çыру Еххĕмĕн мар пек туйăнать,—терĕ вăл, çырăва мана парса.

Чăнах та çырăва унăн ывăлĕ Ефим çырман. Михал мучие Н-ски полкăн штабĕ унăн ывăлĕ нимĕç фашисчĕсене хирĕç паттăррăн çапăçса вилни çинчен пĕлтернĕ. Эпĕ хурлăхлă пĕлтерĕве вуласа патăм.

— Ылхан сире, фашистсем, çынвĕлеренсем! Эсир манăн пĕртен-пĕр ывăлăма вĕлертĕр. Юратнă Еххĕм, эсĕ тăван çĕршывшăн çапăçса чаплă вилĕмпе вилтĕн. Ылханлă Гитлер, сана хирĕç пĕтĕм тĕнче çĕкленет, часах санăн шăпу та тулĕ!—терĕ Михал мучи.

Михал мучи халĕ килте пĕчченех пурăнать.

* * *

Çанталăк паян иртенпех лăпкă тăрать, пĕр çил те çук. Тÿпери хĕвел пĕр канăçсăр хĕвеланăçнелле шăвать. Михал мучи хăйĕн анкартинче ĕçлет. Тимлĕн, пуçа çĕклемесĕр ĕçлет вăл.

Çанталăк каçала енне сулăннă май, хĕвеланăç енчен хулăм пĕлĕтсем тухма пуçларĕç, кассăн-кассăн çил вĕрме тытăнчĕ.

— Армана каяс пуль, çил вĕрме пуçларĕ. Колхозăн тыррине илсе хăпартни пĕр-ик кун иртрĕ ĕнтĕ, çаплах авăртса параймарăм-ха. Ку хушăра çилĕ те пулмарĕ те,—терĕ Михал мучи çиле хирĕç пăхса илсе.

Михал мучи 3-мĕш çул ĕнтĕ мельник пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне юрататать, çавна пула армантан тухма та пĕлмест. Вăл колхоз ĕçне хăйĕн ĕçĕнчен те хакла хурать. Михал мучи тырăсене вăхăтра авăртса парать, ĕçе лайăх туса пыма тăрăшать. Колхоз—унăн килĕ, совет влаçĕ—аслă хÿтлĕх. Ватă пулсан та, çĕнтерÿ тума пулăшас шутпа, вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне ĕçе хурса пырать.

М. КУСТИКОВ.

ЭЛĔК р.

Шкулсем вĕренÿ çулне хатĕрленеççĕ

ÇĔРПУ. Районри шкулсем çĕнĕ вĕренÿ çулне тимлĕн хатĕрленеççĕ. Хăшпĕр шкулсем вĕрентме тытăнма хатĕрленсе çитнĕ те ĕнтĕ. Районри 49 шкултан 21 шкулне юсаса çитернĕ. Уйрăмăнах Елаш (директорĕ Яковлева), Сталино (директорĕ Александрова), Топнер (директорĕ Альбатрос) шкулĕсенче çĕнĕ вĕренÿ çулне лайăх хатĕрленеççĕ. Çĕрпÿри вăтам шкулта, Вăрăмçутри, Ойкасри туллимар вăтам шкулсенче кантăксене лартаççĕ, кăмакасене юсаççĕ. Чылай шкулсем хĕл каçмалăх вутă хатĕрлесе турттарса кучĕç.

Çав вăхăтрах Кокшакасси (директорĕ ĕçне вăхăтлăха туса пыракан Васильева), Туçи (директорĕ Орлов), Чурачăк (директорĕ Кузнецов), Хыркасси (заведующийĕ Иванова) шкулĕсем вĕренÿ çулне начар хатĕрленеççĕ.

Шкул çулне çитнĕ ачасене шкула явăçтарма шкулсем хатĕр. Кашни шкулта, кашни класра миçе ача вĕренесси пур шкулсенче те паллă. Нумай шкулсенче учебниксене илессипе сутассине йĕркеленĕ. Вĕренÿре кирлĕ хатĕрсене туянаççĕ тата пуррисене юсаççĕ.

Çуллахи вăхăтра шкулта вĕренекен ачасен бригадисем учительсем ертсе пынипе колхозсенче хастарлăн ĕçлеççĕ. Районри туллимар вăтам шкулсемпе вăтам шкулсенчи 2.047 ача августăн 1-мĕш тĕлне 22 пин ĕçкунĕ ытла тунă. Пуçламĕш шкулсенчи ачасене колхозсен уйхирĕсенче пучах пухас ĕçе явăçтарнă.

Учительсене шкулсем тăрăх вырăнаçтарса тухнă. Анчах туллимар вăтам шкулсемпе вăтам шкулсем валли историпе вĕрентекен 3 учитель тата вăтам шкулсем валли пионер вожатăйĕсем çитеймеççĕ.

Шкулсен ĕçĕнчи пур çитменлĕхсене те кĕске вăхăтрах пĕтерсе, çĕнĕ вĕренÿ çулне большевикла хатĕрленнипе кĕтсе илес пулать.

А. ФЕДОРОВ,
А. ИВАНОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1350

Типография №1 Управлени я полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6, 58 84 п. л.